Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

49 (7689) № * Шăмат кун, 2009 çулхи июнĕн (çĕртме) 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Июнĕн 21-мĕшĕ – Медицина ĕçченĕсен кунĕ

## Ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ



*Çынсен сывлăхне сыхлас ĕçре медицина ĕçченĕсен тӳпи пĕчĕк мар. Çак сăмахсене вара чи малтанах районти тĕп больницăн хирурги уйрăмĕ пирки каламалла. Пултаруллă ĕçченсем тăрăшаççĕ кунта. 7 çынлă коллектива Г.М. Огурцов ертсе пырать. Шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ вĕсем.*

*Сăн ӳкерчĕкре: хирурги уйрăмĕнче вăй хуракан Ю.А. Кузнецов, Г.М. Огурцов, Л.Н. Андреев, А.П. Афанасьев.* ***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

**Сывлăха сыхлас ĕçре вăй хуракансем тата çак ĕçĕн ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ – Медицина ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Пурнăçра сывлăхран хакли нимĕн те çук. Эсир чирлĕ çынна ура çине тăратассишĕн ырми-канми тăрăшатăр. Çапла майпа вĕсене пурăнма вăй-хал паратăр, пурнăç илемне çĕнĕрен туйма пулăшатăр, савăнăçпа шанчăк парнелетĕр, сывлăха упрама вĕрентетĕр. Чун ăшши, ырă кăмăл, çепĕç сăмах, сисĕмлĕх хăвăртан пулăшу ыйтакан кашни çын валли çитет сирĕн. Çапла майпа эсир çынсен сывлăхне кăна мар, чунне те сиплетĕр. Тавах сире пархатарлă ĕçĕршĕн.

Юлашки çулсенче районти медицина учрежденийĕсем паянхи кун ыйтакан сиплев тата диагностика оборудованийĕсемпе, «Васкавлă пулăшу» машинисемпе пуянланчĕç. Çакă чире вăхăтра тупса палăртса пысăк квалификациллĕ пулăшу пама май парать. Эсир малашне те кашни çынпа тимлĕ те ăшă кăмăллă пуласса шансах тăратăп. Çăмăл мар ĕçĕрте çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. Юратупа ăшпиллĕх чирлисем валли те, çемье валли те çиттĕрччĕ сирĕн. Кунçулăр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**Уважаемые работники здравоохранения!**
**ОАО «Чувашская медицинская страховая компания» искренне поздравляет вас с профессиональным праздником – Днем медицинского работника!**

ОАО «Чувашская медицинская страховая компания» на протяжении 17 лет взаимодействует со всеми медицинскими учреждениями Чувашской Республики. Медицинские работники для нас – особая категория партнеров, совместная работа с которыми дает уникальную возможность ощутить себя причастными к вашему высокому и милосердному делу.

В этот замечательный день желаем Вам доброго здоровья, успехов во всех делах и начинаниях и неисчерпаемого запаса сил для дальнейшей плодотворной работы, направленной на заботу и охрану здоровья граждан. Счастья и благополучия Вам и Вашим близким.

**Генеральный директор**
**ОАО «Чувашская МСК»**
**Т.М. ВИШТЫНЕЦКАЯ.**

Тӳрĕ калаçу

## «Тĕнчери кризис пире шанăç парать»

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров республика çыннисемпе телевиденипе радио хумĕсем çинче тĕл пуласси тахçанах йăлана кĕнĕ. Вăхăтпа техника аталанни çĕнĕ майсем те уçса парать. Кĕçнерни кун президент «Волга-Телеком» сечĕ урлă халăхпа çыхăнчĕ, çавна май пресс-конференципе наци радио эфирĕнче тата республикăн влаç органĕсен порталĕнче паллашма май пулчĕ. Калаçăва Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисен тата Вăрмар районĕн çыннисем те хутшăнчĕç.

Президент тĕл пулу сăлтавĕсене çапла ăнлантарчĕ: Чăваш Енте республика кунне халаллана мероприятисем пуçланчĕç. Финанс кризисĕ аталаннă тапхăртах пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама пултартăмăр. Çĕнĕ Шупашкарта «Роснано» корпораци хĕвел батарейисем кăларакан завод лартас ĕçе тытăнчĕ. Çавăн пекех Шупашкар ГЭСĕн шывне 68 метра çити хăпартас ыйтăва татса пама май килчĕ.

Президент икĕ сехет ытла пынă тĕл пулура вăтăр ытла ыйтăва хуравларĕ. Хваттер туяннă чухне улталаннă çынсене правительство пулăшассине шантарчĕ. Бензин хакĕсем пысăк пирки сăмах тапратсан, нефть компанийĕсен пайне национализацилеме кирлине асăнчĕ. Мĕншĕн тесен ку стратегилле отрасль шутланать. Эмел хакĕсем ӳснине граждансене эмелпе тивĕçтерессине страхламалли программа йышăнсан çеç татса пама май пуррине палăртрĕ.

Ял çыннисене тӳрремĕн пырса тивекен ыйтусене те хуравларĕ президент. Вĕсенчен чи çивĕччи – сĕтĕн туянмалли хакĕ чакса кайни. Ку енĕпе хамăрăн та тăрăшмалла. Вырăнсенче сĕт пуçтарса тирпейлекен кооперативсем йĕркелемелле. Правительство ку тĕллевпе граждансене 8 çул таран пысăк çăмăллăхсемлĕ кредитсем парать. Раççей шайĕнче Белоруссире кăларнă типĕ сĕте туянма чарни те пирĕн производительсене пулăшмалла.

Хăмла туса илес ыйту çине çитсен те президент кунта пире тĕнчери финанс кризисĕ пысăк шанăç панине палăртрĕ. Паян чикĕ леш енчи хăмлана туянни тăкаклă. Раççейре вара ăна халĕ пирĕн республикăра çеç туса илеççĕ.

Ял урамĕсене асфальт сарасси те çивĕч ыйту. Ку енĕпе кăçал 300 миллион тенкĕ уйăраççĕ. Çитес çул 1 миллиард тенкĕ тăкаклама палăртнă. Ку укçасене тивĕçес тесен вырăнти влаç органĕсен уйрăмах пуçаруллă пулмалла. Вĕсен вăхăтра проектсене хатĕрлесе памалла. Ял урамĕсенче асфальт пуласси паян ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен килет.

Вырăнти влаç органĕсен ответлăхне президент уйрăммăн тепĕр ыйту çине хуравланă чухне те палăртрĕ. Хăй вăхăтĕнче ял çыннисенчен килсене газ кĕртме тесе укçа-тенкĕ пуçтарнă. Вырăнти чиновниксем ăна тавăрса пама шантарни ултав пулса юлчĕ. Апла пулин те республика влаçĕ ку ыйтăва курмасăр тăма пултараймасть. Бюджетра укçа-тенкĕ ытларах пуçтарăнма пуçласан ун патне таврăнмалла пулать.

Н.В. Федоров Мускава ĕçлеме куçасси пирки тăтăш сăмах сарăлни çинчен аса илтерсен президент çапла каларĕ: «Эпĕ 16-мĕш çул ĕçлетĕп, паллах, мана тĕрлĕ ĕç вырăнĕсем сĕннĕ, анчах тăван республикăшăн ĕçлессине эпĕ телей вырăнне йышăнатăп». **А. ТИХОНОВ.**

Республика кунĕ

## Муркашсем те хăйсене кăтартĕç

***Июнĕн 24-мĕшĕнче Республика кунне уявлатпăр. Иртнĕ çул хăнасене хамăрăн Муркаш çĕрĕ çинче кĕтсе илнĕ пулсан, çак уявăн эстафета патакне Вăрмарсене патăмăр. Кăçал иртекен уявра Муркашсем хăйсене епле кăтартĕç? Хăш коллективсенче курĕç Муркашсене республикăна килнĕ хăнасем? Çак ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕнчен А.Е. АНДРЕЕВАРАН.***

– Республика кунне халалланă мероприятисем маларахах пуçланаççĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче акă районтан виççĕн халăх пултарулăхĕн маçтăрĕсен Шупашкарта иртекен «Русь мастеровая» куравне хутшăнĕç. Уява пуçтарăннисем пирĕн районти Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕн П.Я. Мазуркинăн йывăçран касса эрешленĕ хатĕрĕсемпе, И. Егоровăпа М.В. Филиппова тăратнă ĕçĕсемпе паллашĕç.

Июнĕн 24-мĕшĕнче Лакрей вăрманĕнче ветерансен юрлакан коллективĕсен фестиваль-смотрĕн «Манма çук çак çуркуннехи куна» гала-концерчĕ пулать. Унта районти Культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен хорĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарĕ.

Республика кунĕнче Чăваш наци конгресĕ Шупашкар хули 500 çул тултарнипе хисепленекен культурăпа кану паркĕнче Пĕтĕм чăвашсен уявне – «Акатуй» ирттерет. Пирĕн районăн унта хăйĕн палатки пулĕ. Ярапайкассинчи «Екрем» халăх коллективĕ чăвашсен йăли-йĕркине кăтартса парĕ. Муркаш райповĕ чăваш апатне – шӳрпине пĕçерĕ. Районти спортсменсем уявра иртекен тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсене хутшăнĕç. **Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Халăх тата влаç – тĕллевсем те пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех

## Ыйтусем тĕрлĕрен пулчĕç

Район администрацийĕ халăх ыйтăвĕсене татса парассине пысăк тимлĕх уйăрать. Çавна май район администрацийĕн специалисчĕсем ытти службăсен ĕçченĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсене тухса халăха вырăнта хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнасси ырă йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Халăха районта пулса иртекен обществăлла политика пулăмĕсемпе паллаштарас, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ çинчен каласа парас, район администрацийĕпе тата районти депутатсен Пухăвĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăну та кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн июнĕн 17-мĕшĕнче те районта пур ял тăрăхĕсенче те граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли кун иртрĕ. Хальхинче район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем, депутатсен районти Пухăвĕн тата ял тăрăхĕсенчи депутатсен Пухăвĕсен депутачĕсем тухрĕç вырăнсене.

Йӳçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансене те вăл е ку ыйтусем канăç памаççĕ иккен. Кунти ветерансен Канашĕн ертӳçи З.М. Кутузов Йӳçкассинчи чиркĕвĕн старости шутланать.

– Малтан тĕрлĕ пĕлтерӳсене вырăнти радиопа параттăмăрччĕ. Халь чиркӳ тунă май халăхран ыйтмалли, вĕсене каламалли сахал мар. Юпа çумне çакнă пĕчĕк хут татăкĕ çинче нимех те калаймастăн. Районта хăçан та пулин радио çĕнĕрен пулать-ши? – тесе ыйтать вăл.

Çавăн пекех ăна патшалăх «Çамрăк çемье» программăпа паракан пулăшу тин çеç çемье çавăрнă мăшăрсене хваттер туянма çителĕксĕрри те пăшăрхантарать.

Зиновий Михайлович чиркӳ валли священник кирлине, çак ĕçре те, чиркӳ тăвассинче те пулăшу кирлине палăртрĕ.

– Районта ку ыйтупа ĕçлекен ятарлă организаци çук-ши? - тет вăл.

– Пирĕн прихутра 900 кил. Кашни килтен чиркӳ тума пĕрер пин тенкĕ парсан никамах та çука юлмĕччĕ, – халăх патне çитерес шухăша палăртать Зиновий Михайлович.

– Хуçалăх ертӳçи П.П. Давыдов питĕ пулăшать чиркӳ тăвас ĕçре, – тет вăл, Йӳçкасси тăрăхĕнче çитĕннĕ, халĕ тĕрлĕ çĕрте пурăнакан çынсем пулăшасса та шанать.

Йӳçкасси витĕр Шупашкартан Элĕке каякан çула тăвас ыйтăва та хускатрĕç кунта.

– Харăсах 3 ачана çемьене пурăнма илсен, çав çемьене хваттерпе пулăшмасть-ши патшалăх? – тесе ыйтать тепри.

Матьăк клубĕнче ĕçлекенсене çурт тăрри япăхни пăшăрхантарать.

– Районтан пулăшу пулмĕши юсав ĕçĕсем тума? –ыйтаççĕ вĕсем.

Граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăннă хыççăн кунта вырăнти активпа тĕл пулу иртрĕ. Районти лару-тăрупа, район администрацийĕ пысăк тимлĕх уйăракан ĕçсемпе паллаштарнă хыççăн тĕл пулăва килнисем чун ыратăвне кăларчĕç. Вĕсене те çынсем эрех енне туртăнни пăшăрхантарать.

– Магазинсенче эрех сутма пачах та чармалла мар-и? - текенсем те пулчĕç.

Çакă савăнтарать, ку тăрăхра пурăнакан халăх пурнăç çине сӳрĕккĕн пăхмасть. Ытларах хамăртан (çав шутран ачасене воспитани парасси те, эрех ĕçме пăрахасси те) килнине ăнланать. Тĕл пулура ытти чылай ыйтусемпе пĕрле 2009 çулхи 2 çур çул валли хаçат-журнал çырăнтарас ыйтăва та хускатрĕç.

Кашни ял тăрăхĕнчех тĕрлĕрен ыйтусем пулчĕç. Чылайăшĕ çине вырăнтах хурав пачĕç. Татса пама вăхăт кирлĕ ыйтусемпе вара малалла ĕçлеççĕ. Вĕсем мĕнле пурнăçланни çинчен хаçат страницисенче паллаштарсах тăрăпăр.

**Л. ТУКТИНА.**

Механизаторсене пĕлме

## «Стройка» операци

Республикăри патшалăх техника надзор инспекцийĕн ертӳçи В. Димитриев ĕç хăрушсăрлăхĕ тивĕçлĕ шайра пултăр тесе июнĕн 22-мĕшĕнчен июлĕн 3-мĕшĕччен республикăра «Стройка» профилактика операцийĕ ирттересси çинчен приказ кăларчĕ. Çак тапхăрта строительствăра ĕçлекен тракторсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулма ыйтас килет.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР Гостехнадзорĕн районти аслă инспекторĕ.**

Саламлатпăр

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, Муркашри прокурор заместительне **Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ**А юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе тулли кăмăлтан саламлатпăр. Эсĕ пурнăçлакан ĕç район аталанăвĕшĕн, унăн историйĕшĕн хăйне евĕр тӳпе пуласса шанатпăр, татах нумай çул пирĕнпе юнашар ырă-сывă пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр, телейӳпе ăнăçу тăтăшах юнашар пуласса шанатпăр.

**Салампа: тăванĕсем, юлташĕсем.**

## Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**